# ÇЕÇПĔЛ САМАНЧĔ

Михаил СУНТАЛ

## АЧА ÇУРАТТАРАКАН АПĂС

ВĂХĂТПА пĕрле Çеçпĕл те ӳссе çитĕнсе пынинчен тĕлĕнетĕп. Çуралнăранпа 100 çул çитрĕ те эпир ăна пачах урăхла курма тытăнтăмăр. Вăл халь тек ĕнтĕ çулăмлă революционер мар, вăл пирĕн халăх пророкĕ пулса тăчĕ. Тепĕр çĕр çултан мĕн тесе калăпăр-ши, пĕлместĕп, анчах та ман çак пĕрлĕхлĕ шухăшлав çумне хушса, вăл чăваш ачине çураттаракан апăс теес килет. Пулнă вĕт-ха, кашни ялта тенĕ пекех, ача çураттаракан апăс карчăксем. Вăт çавăн пекрех куратăп эпĕ Çеçпĕл ĕçне. Кăна ĕнентермех те кирлĕ мар пулĕ те, çапах та "Чăваш ачине" сăвăран пĕр çаврăм илсе парам та ку шухăш шăп та лăп хăй вырăнне кĕрселарĕ.

"Кăвар чĕре! Кăвар чĕлхеллĕ
Чăваш ачи, сассуна пар!
Тухсам кунта. Сана кĕтеççĕ
Килсем! Килсем! Эс пур, –
çук мар", –

тенинче, пĕрре пăхса курăнать, Çеçпĕл ача çураттарать. Кун пекки ытти халăх поэзийĕнче хăçан та пулин пулнă-ши, пĕлместĕп, чăвашра вара, иккĕленместĕп, ĕмĕрĕпех. Ку ĕнтĕ вăл чăваш пĕтсе çитнипе те çыхăннă. Ăна вăратса çĕнĕ пурнăç пуçласа ямалла пулнă. Çитменнине ахаль ача та мар кирлĕ пулнă çĕнĕ пурнăç тума. Вăл, асăрхăр, "кăвар чĕлхеллĕ". Ку историллĕ пулăм. Революци вăхăтĕнче, тĕрĕссипе каласан, икĕ тĕнче пĕр-пĕринпе тупăшнă. Пурлăх пайланă. Чăвашăн та çыврăрса юлма юраман. Унсăрăн ун пурлăхне йăлт туртса илме пултарнă. Ăна хӳтĕлекен çын, халăх ачи, кирлĕ пулнă. Çавăн пек объективлă ыйту сиксе тухнă пулĕ тетĕп вăл вăхăтра. Революци чăваш халăхне пĕр енчен çĕклеме те, тепĕр енчен пĕтерме те пултарнă. Çĕнĕ пурнăçра çĕнĕ майсем шыракан Çеçпĕл çĕнĕ чăваша хăвăртрах килме йыхăрнă. Ăна вăл чăн юмăç карчăк пек юмласа çырнă:

"Чăваш чĕлхи ăсти! Кăварлă
Чĕрӳ сан сисĕ чĕннине.
Шанатăп. Ĕмĕте усратăп:
Эс килĕн. Килĕн тĕнчене".

Çавă çĕнĕ çыннăн пурнăç тумалăх алăра мĕн пулмалла пулĕ тетĕр? Хĕç-пăшал-и, укça е çар? Çук, чăн малтан унăн чĕлхе ăсти пулмалла тет Çеçпĕл. Çак тĕнчене çĕнсе илес тесен пĕртен пĕр хатĕрпе, чĕлхепе кăна, усă курмалла. Вара çав ăста хăй тĕллĕнех тĕнче патши пулса тăрать. Ахальтен-им тахçан авал-ĕлĕк Çеçпĕл çуралнă яла "Шĕкĕр" ят хунă пулнă. "Шĕкĕр" тени вăл шумерсен чĕлхинче "патшасен резиденцийĕ" тенине пĕлтерет. Ахальтеним эпир хамăрăн тĕп хуламăра "шĕкĕр Шупашкар" тетпĕр. "Шĕкĕр" тени тата "корона", "власть", "мухтав" сăмахсемпе пĕр килет. Апла, Çеçпĕл тахçанхи патшасен династийĕнчен тухнă çын тесе калама та пулать. Кăна ун çемйинче юмăç традицийĕсене тытса пыни те çирĕплетет. Хăй те вăл, поэт ĕнтĕ вăл, паллă, хăй те юмăç пек. Вĕрет, сурать, сăвă калать... Сăвă каласах ача çуратарать. Çакă вăл Çеçпĕлĕн, ман шутпа, калама çук тĕлĕнмелле те пархатарлă ĕçĕ, çакăнта ун чăн пĕлтерĕшĕ. Хăйне вăл, хăй ăнланмасăрах тен, халăхăн ашшĕ пек тыткаланă. Халăх апла ăна, тен, арăм пекех курăннă. Çавăнпа та ман унăн тепĕр сăввине чăваш арăмне халалласа çырнине пăхса тухас килет. Çавăнта тата тепĕр темле вăрттăнлăх упранса юлмани, тетĕп. Эпир вĕт вăл сăвва шкулта мĕн ачаран ăсран калама вĕреннĕ те – пĕрмай ай епле япăх пурăннă пирĕн чăваш арăмĕ ĕлĕк тесе пурăнатпăр. Чăнласах та ĕлĕкхине кăна питлекен сăмах унта е тата темĕскер пур?

## МАЛАШЛĂХ ПРОГРАММИ

"Чăваш арăмне" сăвăра, чăн та, иртнĕ пурнăçа питлесе, чăваш хĕрарăмне хута кĕрсе çырни пит нумай. Вăл "хура-шур анчах курмашкăн" çуралса ӳснĕ мĕн. "Хĕрарăмăн çӳçĕ вăрăм, ăсĕ кĕске, – тетчĕç, – уншăн çут тĕнче курмашкăн мĕнле кирлĕ? – тетчĕç, – килтерĕш тирпейлесессĕн тата ĕне, сурăх пăхса усрама пĕлсессĕн, мĕне кирлĕ урăх?", – тесе çырни ял хĕрарăмĕн хальхи пурнăçне кăтартса панă пекех туйăнать. Апла 100 çул иртсен те тĕп ĕçсем улшăнман. Ачи-пăчи, кăмака умĕ, вылькăх-чĕрлĕхĕ... Чăваш хĕрарăмĕ халĕ те, чăн та, çут тĕнче курайма-сăрах автан сассисĕр яла кайса выртать. Мĕн усси ĕнтĕ пурăнни? Хĕрарăм шăпи ун чунне хытах ыраттарнă курăнать. Çавăнпа та вăл чăваш арăмне пурнăç тумалăх хăйне майлă программăллă сăвă çырать. Унта, сăввăн вĕçнерех, вăл хĕрарăма та çын шутне кĕртес тесе тăрăшать. "Ĕмĕр чура пулма çитĕ, Чура пулма намăс!.." – тет. Кунта тӳрех, çак йĕркесене вуланă-çемĕн, вырăссен каларăшĕ аса килет. "Курица не птица, женщина не человек". Çак формулăран хăтăлса пĕтейместпĕр мар-и эпир халĕ те. Хĕрарăм чунĕ – выльăх чунĕ пек – пĕр сăмахсăр макăрма кăна пĕлет тетпĕр-ши? Çук, хĕрарăмăн чăнласах та пысăк, çав вăхăтрах чăтăмлă та çирĕп чунне асăрхамасăр эпир çылăха кĕретпĕр. Çавăнпа мар-и тата вăл хăй ачишĕн, хăйĕншĕн тăма вĕрентеймерĕ. Эпир Çеçпĕл сăввине тĕрĕс мар ăнланнăран тен çапла килсе тухрĕ? Унта вăл епле: "Ирĕклĕ кун-çул тумашкăн Тăрăр пурте харăс!.." – тенĕччĕ те. Эпир ăна ăша хывмарăмăр пулас, ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çынсене пулăшас темерĕмĕр. Вăл-ку çеç-и, чăваш арăмĕ хăй ачине сутрĕ, çавăнпа та "Чăваш чĕлхишĕн" тăма никамах та хатĕр пулмарĕ. Хам пулсан-и, кашни килте турăш вырăнне "Чăваш арăмне" сăвва пысăккăн та хитрен çыртарса стена çине çактарса хуртарнă пулăттăм, кашни ир ăсран калаттарнă пулăттăм кашни чăваш арăмне. Çук çав, эпĕ Çеçпĕл мар. Эпĕ ăна ăнланса илес текен çын кăна. Ют халăхсем кулнине чăтса иртерме вăй пухса çитрĕмĕр пек те, çапах та хамăра хамăр çынран каярах хума пăрахмарăмăр. Çавна пулах, кая юлас килмест те, тӳрех, ача çуралнă çуралманах ăна ют ят хуратпăр та çапла калама вĕрентетпĕр. Ара, ютă вăл пиртен аванрах та-ха! Пирĕн вара ма аван пулас мар? Хăрушла улăштару! Эпир хамăрăн ачан аталану программине йăлт пĕтерсе хуратпăр вĕт кун пек! Çеçпĕл пире, паллах, урăхла вĕрентсе каланă. Эпир вара халĕ те ун халалне ăша хывмасăр тăратпăр-и? Çавăнпа мар-и пире хамăр ачасемех акă, кашни хаçатрах вулатпăр, тапатапа хĕнеççĕ, вĕлереççĕ те. Хăçан, ăçта пулнă вăл ачи хăй амăшне вĕлерни?! Апла-тăк, ун пурнăç программине чăнласах улăштарнă, хăйĕн амăшех, çавă пушшех! Тек ун пек ан пултăр тесен, атьăр-ха, Çеçпĕле татах вĕренер. Сăввине ăсран каласа унпа пĕрле шухăшласа малашлăха, çĕнĕ куна кĕпер хывар. Чăваш ачи халăха хӳтĕлеме хатĕр тăтăр. Çакăнта пулĕ тетĕп "Чăваш арăмне" халалланă сăввăн чăн пĕлтерĕшĕ, тĕп идейи.